Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

27 (8093) № ✻ Юн кун, 2013 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 17-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Апрелӗн 19-мӗшӗ – Ӗҫпе тивӗҫтерекен служба ӗҫченӗсен кунӗ

## Тӑрӑшуллисенчен пӗри



***Эсир сӑн ӳкерчӗкре Нина Сафиулинӑна куратӑр. Нина Геннадьевна районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центрта 17 ҫул вӑй хурать. 1996 ҫулта вӑл кунта пӗрремӗш категори специалистӗнче ӗҫлеме тытӑннӑ. Халӗ вӑл – ертсе пыракан инспектор.***

***Н. Сафиулина 1982 ҫулта Хусанти С.М. Киров ячӗллӗ химипе технологи институтне вӗренсе пӗтерне. Малтанхи вӑхӑтра 8 ҫул хушши Муркашри «Сельхозтехника» пӗрлешӗвӗнче тасатмалли сооруженисен маҫтӑрӗнче, кайран 5 ҫул хушши пӗрлешӳрех складра комплектовщикре тӑрӑшнӑ. Шанса панӑ ӗҫе яланах ответлӑха туйса пурнӑҫланипе палӑрса тӑнӑ.***

***– Пирӗн ӗҫ ответлӑ та пӗлтерӗшлӗ, – каласа парать вӑл. – Кашниех кунта хӑйӗн хуйхипе килет. Пирӗн тивӗҫ вара ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ ҫынсене учета илесси кӑна мар, чи малтанах ӗҫ тупма пулӑшасси, хӑйсен ӗҫне йӗркелеме майсем туса парасси. Нина Геннадьевна вара шӑпах ӗнтӗ ӗҫ паракансемпе ҫыхӑнса ӗҫлессишӗн, ӗҫсӗррисене ӗҫе вырнаҫма пулӑшассишӗн ответлӑ пулса тӑрать. Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центр республикӑра ырӑ ятлисем шутӗнче пулнинче унӑн тӳпи те ҫук мар.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Шкул 3 эрнерен ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫлӗ

Чрезвычайлӑ лару-тӑру

***Виҫӗ эрне хушшинче Шетмӗпуҫӗнчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул йӗркеллӗ ӗҫлеме тытӑнмалла – ҫакӑн пек задача лартрӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев чрезвычайлӑ лару-тӑрусене асӑрхаттарассипе тата пӗтерессипе, пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе тивӗҫтерессипе ӗҫлекен районти комисси ларӑвӗнче. Унччен Р. Тимофеев Шетмӗпуҫӗнчи шкула тепӗр хут ҫитсе килчӗ, шкул директорӗпе А. Степановӑпа тӗл пулчӗ.***

Аса илтеретпӗр, апрелӗн 14-мӗшӗнче «01» пульт ҫине 10 сехет те 36 минутра Шетмӗпуҫӗнчи тӗп шкулта пушар тухни пирки хыпар ҫитнӗ. Тепӗр минутранах пушар вырӑнне Муркашри 37-мӗш пушар чаҫӗн икӗ автоцистерни тухса кайнӑ. 10 сехет те 42 минутра Шетмӗпуҫӗнчи пушара хирӗҫ кӗрешекенсен ирӗклӗ команди, «Герой» тата «Ударник» хуҫалӑхсен ведомство пушар хуралӗсен командисем те тухнӑ. Унта пысӑк пушарсене сӳнтерекен пунктӑн пӗр автоцистерни те ҫитнӗ.

Кӗске вӑхӑтрах вырӑна ҫитсе пушарнайсем ҫулӑма сӳнтерме тытӑннӑ. Вӗсем ҫитнӗ вӑхӑтра шкулта ҫи-пуҫ ҫакмалли пӳлӗмри йывӑҫ вешалкӑсем ҫуннӑ пулнӑ. 10 сехет те 50 минутра Раҫҫей МЧС-ӗн республикӑри тӗп управленийӗн оперативлӑ ушкӑнӗ ҫула тухнӑ. 11 сехет те 20 минутра пушара сӳнтернӗ.

Ҫулӑма пула шкулӑн пӗрремӗш хутӗнчи асӑннӑ пӳлӗмри вешалкӑсем ҫунса пӗтнӗ, коридор стенисем тӗтӗмленсе хӑрамланнӑ. Хальхи вӑхӑтра пушар сӑлтавне пушар тӗпчевӗн лабораторийӗн экспертӗсем тӗпчеҫҫӗ.

Чи пӗлтерӗшли – пӗр ҫын та инкек тӳсмен. Ҫакна палӑртрӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ ларура. Специалистсем малтанлӑха каланӑ тӑрӑх, пушар электричество пралукӗнчен тухнӑ.

Район администрацийӗн вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин пайӗн пуҫлӑхӗ З. Дипломатова Шетмӗпуҫӗнчи шкулта вӗренекенсем – 82 ачана – Йӳҫкассинчи вӑтам шкула турттарма пуҫланине пӗлтерчӗ. Йӳҫкассинчи шкул ҫурчӗ проектпа килӗшӳллӗн 624 ачана йышӑнма пултарать. Хальхи вӑхӑтра унта 200 ытла вӗренекен. Ҫавӑнпа та класс пӳлӗмӗсемпе тивӗҫтерессипе ыйту пулмалла мар. 5–8-мӗш классенче вӗренекенсен йышӗ кӑна пысӑк пулма пултарать. Ҫавӑнпа та ҫак ӳсӗмрисен вӗренӗвне Ҫатракассинчи вӑтам шкулта йӗркелес шутпа ӗҫлеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен унта вӑтам сыпӑкри ачасем нумаях мар.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

Акци

## Чӑвашла тӗрӗс ҫыратпӑр-и?

И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ, И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗ тата Чӑваш Республикин Вӗренӳ институчӗ «Хыпар» хаҫатпа, Чӑваш наци радиовӗпе пӗрле чӑвашла тӗрӗс ҫырма пӗлнине тӗрӗслес тӗллевпе пӗрремӗш хут «ПӖТӖМ ЧӐВАШСЕН ПӖРЛӖХЛӖ ДИКТАНЧӖ» акци ирттереҫҫӗ. Вӑл 2013 ҫулхи ака уйӑхӗн 24-мӗшӗнче чӑвашсем пурӑнакан мӗн пур хулапа ялта иртет.

Диктант И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче 13.00 сехетре пуҫланать. Хӑйсем пурӑнакан вырӑнтах ҫырма кӑмӑл тӑвакансем валли диктант текстне ҫав вӑхӑтрах Чӑваш наци радиовӗпе вулаҫҫӗ. Компьютерпа ҫырнӑ (наборланӑ) е алӑпа ҫырнӑ текста сканерпа кӑларса диктанта вуласа пӗтернӗ хыҫҫӑн 10 – 15 минут хушшинче ҫак адреспа ярса памалла: chuv-total-dict@mail.ru.

«Пӗтӗм чӑвашсен пӗрлӗхлӗ диктанчӗ» акци ҫинчен тулли информацие http://www.chuvsu.ru адреспа тупма пулать.

Информаци кунӗ

## Кун йӗркинчи ыйтусемпе

Паян районта пӗрлехи черетлӗ информаци кунӗ иртет. Ӗҫ коллективӗсенче пулса тӗл пулусем йӗркелеме района тӗп хуларан Чӑваш Республикинчи ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерекен патшалӑх службин ертӳҫин ҫумӗ Мефодий Архипов ертсе пыракан ушкӑн килет. Республика представителӗсем район администрацийӗн тата федераллӑ структурӑсен районти представительствисен ответлӑ ӗҫченӗсемпе пӗрле Муркаш, Мӑн Сӗнтӗр, Чуманкасси ял тӑрӑхӗсене ҫитме, вӗсен территорийӗсенчи предприятисемпе организацисенче пулса ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулусем йӗркелеме палӑртаҫҫӗ.

Информаци кунӗн теми паянхи куншӑн уйрӑмах актуаллӑ. Тӗл пулусенче экологи субботникӗсем йӗркелесси, Йывӑҫ кунне йӗркелесси, ялсемпе ҫулсене тата ҫул хӗррисене, масарсене тасатса тирпейлесси, республикӑра 2013 ҫулта тата 2020 ҫулччен тапхӑрта пӗтӗмӗшле вӗренӳ системине модернизацилессин комплекслӑ ӗҫӗсем, ҫерех ӗҫнипе кӗрешесси пирки сӑмах пырӗ.

**Хамӑр инф.**

Патшалӑх пулӑшу ӗҫӗсем

## Инфоматсемпе усӑ курса

Малашне Патшалӑх пулӑшу ӗҫӗсен пӗрлехи порталӗнче инфоматсемпе усӑ курса регистрациленме май пур. Ҫавӑн пекех электрон мелӗпе тӗрлӗ услугӑсем илме пулать.

Харпӑр хӑйӗн кабинетӗнче ӗҫлеме унта регистрациленнӗ хыҫҫӑн тӳрех активаци кодне илме пултаратӑр. Аса илтеретпӗр, активаци кодне илесси вӑл – Порталта регистрациленмелли юлашки утӑм. Ӑна Раҫҫей почти урлӑ та, «Ростелекомӑн» суту-илӳ тата клиентсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен Чӑваш Енри центрӗнче те илме пулать.

Ҫак вӑхӑта республикӑра пилӗк инфомат ӗҫлет. Вӗсене «Ростелекомӑн» филиалӗсен бази ҫинче йӗркеленӗ, Шупашкар, Канаш, Етӗрне, Ҫӗмӗрле тата Улатӑр хулисенче вырнаҫтарнӑ. Устройствӑсемпе кирек кам та усӑ курма пултарать, ҫитменнине тӳлевсӗрех. Интернет сетьне тухма килте компьютер ҫуккисемшӗн ҫакӑ уйрӑмах меллӗ. Аппаратӑн сенсор экран, web-камера тата Порталпа усӑ курассипе пӗрлехи контакт центрӗпе ҫыхӑнма микрофон, заявленисен бланкӗсемпе документсен шаблонӗсене пичетлеме принтер пур.

**ЧР Информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министерствӗ.**

Ененекенсене пӗлме

## Шупашкарта – святойсен ӳчӗсем

Апрелӗн 7-мӗшӗнче Шупашкарти Пукрав-Татиана соборне православинчи хӑват кӑтартакан пуҫ ҫапмалли япаласем – Иисус Христос Хӗрес йӑтнӑ чух тӑхӑннӑ ҫи-пуҫ пайӗсене тата ҫирӗм икӗ святойӑн ҫӗрмен ӳчӗсен пайӗсене пӗрлештерсе тӑракан Хӗрес илсе килнӗ. Хӗресӑн айккисемпе Иоанн Златоуст святителӗн, асапланнӑ Георгий Победоносецӑн, Пантелеймон сиплевҫӗн тата ытти святойсен ӳчӗсен ҫӗрмен пайӗсене вырнаҫтарнӑ.

Святойсен ҫӗрмен ӳтне хисеплесси вӗсем темӗн тӗрлӗ хӑватсем кӑтартма пултарнипе ҫыхӑннӑ. Чи малтанах Святойӑн ҫӗрмен ӳчӗ тӗрлӗ чирчӗртен сиплет тата усал сывлӑша этемрен хӑваласа кӑларма пултарать.

Хӗресе пуҫ ҫапма каяс текенсем Пукрав-Татиана соборне майӑн 5-мӗшӗччен ҫитсе килме пултараҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

Республикӑра

## «Тимлӗ пулӑр – мотоциклист!»

Ҫакӑн пек ят панӑ акци ҫӗр-шывӗпех майӑн 8-мӗшӗнче старт илет. Кампани икӗ кустӑрмаллӑ транспорт хатӗрӗсемпе (велосипед, мотоцикл, скутер) пулса иртекен аварисене асӑрхаттарассипе, ҫул-йӗр ҫинчи хӑрушсӑрлӑха тата водительсен культура шайне ӳстерессипе ҫыхӑннӑ. Акцирен Чӑваш Ен те пӑрӑнса юлмасть. Ӑна ирттерессипе «Ҫӗрлехи кашкӑрсем» мотоклуб пуҫару кӑтартнӑ.

Мероприятисем ҫул тӑваткалӗсенче, автопасарсенче, автовокзалсенче тата автозаправкӑсенче иртеҫҫӗ. Водительсене тимлӗхпе асӑрханулӑх пирки аса илтерекен ятарласа хатӗрленӗ листовкӑсем валеҫсе парӗҫ. Ҫакӑн евӗр мероприятисене мотоциклистсем ҫулсеренех йышлӑн хутшӑннине палӑртаҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне маларах асӑннӑ мотоклуб майӑн 9–10-мӗшӗсенче «Сурские зори» турбаза территорийӗнче «Рев сезона» регионти 2-мӗш фестиваль ирттерет. Ӑна Аслӑ Ҫӗнтерӳ тунӑранпа 68 ҫул ҫитнине халалласҫӗ. Фестивалӗн тӗп тӗллевӗ – ҫитӗнекен ӑрӑва патриот воспитанийӗ парасси тата мотоцикл юхӑмне аталантарасси. Майӑн 9-мӗшӗнче Шупашкарти, Чулхулари, Йошкар-Олари, Хусанти тата ытти хуласенчи юрӑпа ташӑ коллективӗсен концерчӗсене ирттерме палӑртнӑ, ҫакӑнпа пӗрлех спорт ӑмӑртӑвӗсемпе ҫар юррисен конкурсне йӗркелеме тата Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫи ҫинчен калакан фильмсем кӑтартма пӑхса хунӑ. Майӑн 10-мӗшӗнче «Сурские зори» – Шупашкар хули маршрутпа «Астӑвӑм мотоучпӑвӗ» иртет, чупу вӑхӑтӗнче Ҫар мухтавӗн монуменчӗ патне чечек кӑшӑлӗсем хураҫҫӗ.

Саламлатпӑр



Хаклӑ та юратнӑ ҫыннӑмӑра, аттене, мӑшӑра – Муркаш ялӗнче пурӑнакан **Николай Ананьевич РОМАНОВА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе пысӑк кӑмӑлпа саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр. Ачӑрсемпе, тӑвансемпе килӗштерсе, савӑнса пурӑнмалла пултӑр.

Ҫак кунсенчех Елена мӑшӑрӗ, Владимир ывӑлӗ ҫуралнӑ кунӗсене паллӑ тӑваҫҫӗ. Вӗсене те ырлӑх-сывлӑх, телей сунатпӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, ачисем, тӑванӗсем.**

Ҫырӑнтару – 2013

## Июльтен илсе тӑма

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата иккӗмӗш ҫур ҫулта илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Апрелӗн 1-мӗшӗнчен хаҫата ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 216 тенкӗ те 30 пус.**

**Хаклӑ вулаканӑм! Малашне те пӗрле пулӑр!**

# Шкул 3 эрнерен çĕнĕрен ĕçлеме пуçлĕ

Чрезвычайлă лару-тăру

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ачасене шкул автобусĕпе турттарассинче хăрушсăрлăх мелĕсене мала хумаллине, автобуса ачасене вырнаçтармалли нормăран ытла лартмалла марри çинчен çирĕппĕн каларĕ. Çула миçе ача тухнине, каялла миçе ача ларса килнине шута илме май паракан ятарлă журнал çырса пыма та сĕнчĕ. Ку ыйту тĕлĕшпе питĕ тимлĕ пулмаллине палăртрĕ, çавăн пекех шкул автобусĕсен маршрутĕсене тепĕр хут тĕрĕслеме сĕнчĕ.

Ростислав Николаевич çавăн пекех вăхăта сая ямасăр Çатракассинчи тата Йӳçкассинчи шкулсенче вĕрентӳ процесне çĕнĕрен пăхса тухмаллине палăртрĕ. Шетмĕпуçĕнче вĕреннĕ ачасене çав шкулсенче вĕренме хăнăхма условисем туса памалла. Кашни вĕренекен хăйне «ют» шкулта тăван шкулти пек туйтăр. Ĕçе тĕрĕс йĕркелесен ашшĕ-амăшĕ енчен те кăмăлсăрлăх пулмалла мар.

Çакна та палăртмасăр иртме çук. 2-мĕш хут пачах та сиенленмен. Шкулăн пĕрремĕш хутĕнчи класс пӳлĕмĕсене, столовăйне те пушар сиен кӳмен. Тĕпрен илсен, пушар 1-мĕш хутăн коридорне сиенленĕ. Стенасем тĕтĕмпе хуралнă. Электричество пралукĕсене, пушар сигнализацийĕн тытăмне пĕтĕмпех улăштармалла. Хăш-пĕр алăксене, 11 чӳрече, шкул умĕнчи крыльцана тата хутса ăшăтмалли системăна улăштарма тивет. Малтанласа палăртнă тăрăх, пушар 100 пин тенкĕлĕх ытла сиен кӳнине палăртаççĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн сиен калапăшне кура шкул территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăру режимне çирĕплетнĕ.

Тепĕр самант çинче те чарăнса тăмалла. Пушар хыççăн предпринимательсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, çынсем пулăшу кӳме пуçланă та ĕнтĕ. Хăйне май ыр кăмăллăх акцийĕ пуçланнă. Çавăнпа та юсав ĕçĕсене пухăнакан укçа-тенкĕпе тума шухăшлаççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ шкулта шăпах Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи пулăшма пынă çынсемпе тата учительсемпе курса калаçрĕ. Вĕсем тирпей тата юсав ĕçĕсене пуçăннăччĕ ĕнтĕ.

Ларура район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев юсав ĕçĕсем мĕн вăхăтра вĕçленесси сметăсене мĕн чухлĕ хăвăртрах туса хатĕрленипе тачă çыхăннине палăртрĕ. Чӳречесене вара паян-ыранах улăштарма тăрăшмалла.

Ростислав Николаевич ответлă çынсен шкулта маларах пурнăçланă ĕçсемпе çыхăннă документсене тата шкулта ĕçлекенсен инструкцийĕсене тепĕр хут тишкермеллине палăртрĕ. Пушар тухнăшăн яваплисене административлă майпа явап тыттарас ыйтăва пăхса тухмалли çинчен асăнчĕ. Пушар тухнине тишкерессипе вара ятарлă комисси туса хума сĕнчĕ. Чи нумаййи шкул тепĕр виçĕ эрнерен ĕçлеме пуçламаллине палăртрĕ.

Л. ПАВЛОВА.

# Преступленисене асăрхаттарасси пĕлтерĕшлĕ

**РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн пуçлăхĕн Евгений ПЛЕЧОВ подполковникăн докладĕнчен:**

«Пĕрремĕш кварталти кăтартусемпе пирĕн районта преступленисем пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан 15 процент чухлĕ чакнă. Çак вăхăтрах вара çынсенчен килнĕ пĕлтерӳсемпе хыпарсем самаях нумайланнă (883-рен – 1352-не). Шел пулин те преступленисене уçса парассин кăтартăвне пĕлтĕрхи шайра тытса тăраймарăмăр.

Преступленисенчен ытларахăшĕ – превентивлисем тата ют пурлăха вăрлани. Хальлĕхе уйрăмах хăрушă преступленисем, хурах пуснă, çаратнă тата хулиганла тĕслĕхсем пулман.

Оперативлă лару-тăрăва тишкерни çакăнпа пĕрлех пурнăçласа ситерейман ыйтусене уçăмлатать. 1-мĕш кварталта ют пурлăха вăрлани, çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене тата транспорт хатĕрне эксплуатацилессине пăсни пĕлтĕрхинчен ытларах пулнă. Превентивлă преступленисене тупса палăртасси те хавшать. Экономика сферинчи преступленисене, наркотиксен тата хĕçпăшалăн саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене тупса палăртасси тимлăх ытларах ыйтать. Дознанипе следстви подразделенийĕсен те ĕç кăтартăвĕсене лайăхлатма майсем пур.

Преступленисене уçса парассинче шыраври çынсене тупса палăртассин тӳпи те пĕчĕк мар, çак ĕçе лайăхлатмалла. Хыпарсăр çухалнисене тупассипе те ĕçе эффективлăрах йĕркелемелле. Иртнĕ çулсенче шырава пĕлтернĕ çынсене, шел пулин те, тупса палăртман.

Обществăлла вырăнсенче, вăл шутра урамсенче тунă преступленисем сахалланнине палăртмалла. Асăрхаттару енĕпе пуçăннă ĕçе, преступноçа чакарас тĕллевпе палăртса хунă комплекслă мероприятисене пăрахăçламалла мар. 2012–2015 çулсене палăртнă «Муниципалитетăн хăрушлăхсăр тытăмĕ» район программипе планланă тăрăх паянхи куна район центрĕнче 4 видеокамера вырнаçтарнă, вĕсене полицинчи дежурнăй чаçпе çыхăнтарнă. Кунсăр пуçне халăх йышлă пулакан 6 вырăна та видеокамерăсем вырнаçтарнă, вĕсем те дежурнăй чаçпе çыхăннă. Муркашри автостанци умĕнче полицие чĕнмелли кнопка та пур.

Массăллă мероприятисем иртернĕ чухне хальхи вăхăтра пурĕ 33 халăх дружинникĕ ĕçлет, çапах та йĕркелĕхе тытса тăрас ĕçе общественноçа активлăрах явăçтармалли сисĕнет.

Маларах преступлени тунисем çак çултан пăрăнма васкаманни (33 преступлени) тата эрех ĕçсе тунă преступленисен шучĕ пысăкки (36 преступлени) шухăшлаттарать. Çапла вара кашни 2-мĕш преступление вĕсем тăваççĕ. Çавăнпа та контроле татах та çирĕплетмелли куç кĕрет.

Хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче туса иртерекен профилактика ĕçне çителĕксĕр тесе хак парас килет. Акă Ильинка, Ярапайкасси, Шетмĕпуç, Йӳçкасси, Турай тата Хорнуй ял тăрăхĕсенче йĕркене пăснă тĕслĕхсем ӳснĕ. Çамрăксем тăвакан преступленисем те ӳснĕ. Участковăйсем, пайри ертӳçĕсем вырăнти халăхпа тĕл пулса отчетсем тунине, ăнлантару тата асăрхаттару калаçăвĕсем иртернине, профилактика кунĕсен ырă витĕмĕ пуррине хирĕçлеме çук. Çапах та профилактика службин ĕçне вăйлатмалла.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта 1763 çынна административлă явап тыттарнă. Вĕсенчен пысăк пайĕ çулйĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснипе çыхăннă. Самах май районти çулсем çинче пулнă инкексем нумайланнă, вĕсенче 19 çын суранланнă, 9 вилнĕ.

Гражданла общество полици ĕçне хутшăнни çынсемпе çыхăну тытма пулăшать, халăх пирĕн ĕçе мĕнле хакланине пĕлсе тăма май парать. Ку тĕлĕшпе 2011 çулта полици уйрăмĕ çумĕнче йĕркеленĕ обществăлла канаш (ертӳçи Николай Григорьевич Ванеркин) активлă ĕçленине палăртас килет.

2013 çулхи январь–март уйăхĕсенчи ĕç пĕтĕмĕшле эпир хамăр ума лартнă задачăсене пурнăçланине кăтартса парать. Ĕçхĕлĕн тĕп енĕсемпе пирĕн позицисем çирĕп темелле. Малашнехи задачăсем шутне вара граждансен шанчăкне ытларах çĕнсе илессине, хамăрăн ăсталăха ӳстерсе пырассине, профилактика ĕçне вăйлатассине, преступноçа хирĕç кĕрешмелли майсене лайăхлатассине тата ыттине те кĕртмелле».

**Çак тата ытти самантсем çинче чарăнса тăчĕ РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕçе тишкернĕ май. Право сыхлакан органсен районти представителĕсемпе пĕрле полицейскисен ĕçне пĕтĕмлетме республикăри шалти ĕçсен министрĕн çумĕ А. Тимофеев подполковник та хутшăнчĕ.**

Лару пĕлтерĕшлĕ те тахçанах кĕтнĕ самантран пуçланчĕ: районти халăх дружинникĕсен командирĕсене удостоверенисем пачĕç. Халăх дружинникĕсем тинех хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçлама тытăнасси куç кĕрет. Пĕрремĕш сăлтавĕ – вĕсен ĕçне кăçалтанпа укçан хавхалантарма май тупрĕç, иккĕмĕшĕ – халăх дружинникĕсен командирĕсен ретĕнче чăннипех те йĕркене мала хуракан çынсем: Ю. Соловьев (малтан шалти ĕçсен пайĕнче вăй хунă), Н. Шишокина (Ильинка ял тăрăхĕнчи питĕ активлă дружинник), А. Куликов («Сывлăх» ФСК директорĕ, депутат) тата ыттисем те.

Е. Плечов докладĕ хыççăн лару ĕçĕ ыйту – хурав мелĕ çине куçрĕ. Малтанах министр çумĕ районти информаципе культура центрĕсенче видеосăнав оборудованийĕ вырнаçтарнипе интересленчĕ. Пур вырăнта та камерăсем çак çуртсен умне тата залсене сăнама май параççĕ. Анчах та ку çителĕксĕр пулнине палăртрĕ А. Тимофеев, клубсен çывăхĕнчи территорисене те «сăнава илме» сĕнчĕ. Полицие чĕнмелли кнопкăсемпе усă курмаллине, май пур таран техникăн ытти енĕсемпе усă курмаллине те палăртрĕç ларура. Видеокамерăсем пирки сăмах пуçарнă вăл май районти социаллă пĕлтерĕшлĕ ытти объектсем çинче те çак оборудовани вырнаçтармаллине çирĕплетсех палăртрĕ. Уйрăмах суту-илӳ точкисене тытакансем (пирĕн районта вĕсем ытларах райпосен аллинче) çакна ăнланма тивĕççине каларĕ. Видеосăнав оборудованийĕсене «Хăрушлăхсăр муниципалитет тытăмĕ» программăпа килĕшӳллĕн лартма палăртнă. Пĕлтĕр çак ĕçе пурнăçлама 470 пин тенкĕне яхăн уйăрнă пулсан кăçал та 400 пин тенкĕрен кая пулмалла мар. Анчах та социаллă пĕлтерĕшлĕ объект хуçисем хăйсен ответлăхне ăнланасшăнах мар пулас. Çак камерăсене вырнаçтарни полицейскисем валли тесе ăнланни тĕрĕс мар, чи малтанах çакă халăх хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă. Çапла вара ку ĕçе бизнеса та, ытти организацисене те (сăмахран, строительство ĕçĕсем активлă пыраççĕ, апла çак ĕçе пурнăçлакансене те социаллă ответлăх пирки аса илтермелле) явăçтармалла.

Республикăра укçан суя купюрисене тупнă тĕслĕхсем çинче те чарăнса тăчĕç. Хальхи вăхăтра техника вăйлă пулнăран вĕсене чăннисенчен те уйăрма йывăр. Укçа тĕрĕслемелли кивĕ приборсем те пур чухне суя купюрăсене тупса палăртаймаççĕ иккен. Çапла вара кашнинех тимлĕ пулмалла. Ултала хăварас текенсем çывăрмаççĕ.

Тепĕр самант – çынсен черченкĕ кăмăлĕ çинче «выляса» час-часах тăванĕ инкеке лекни çинчен суя хыпар пĕлтерсе укçа шахвăртакансем те сахал мар. Çапла вара кашни хыпара тӳрех ĕненме кирлĕ мар. Иккĕленӳллĕ хыпара тĕрĕслесе пăхмалла.

Йĕркене сыхлассинче преступленисене асăрхаттарасси – тĕп ĕçсенчен пĕри. Акă хĕç-пăшалла саккунсăр майпа усă курни, ăна упрани те пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Кăçалтанпа вара хĕç-пăшала тата çакна майлă ытти хатĕре хăй ирĕкĕпе полици пайне пырса паракансене укçан хавхалантарма май тупни те преступленисене асăрхаттарассипе пĕлтерĕшлĕ утăм темелле.

Асăрхаттару ĕçĕнче тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант – районта профилактика кунĕсем тата полици сотрудникĕсем ытти мероприятисене хутшăнса çынсемпе ăнлантару калаçăвĕсем иртерни. Çак ĕçĕн витĕмлĕхĕ лайăх пулнине палăртрĕç ларура.

Пĕтĕмĕшле илсен вара районти полици пайĕн пĕрремĕш кварталти ĕçне республика шайĕнче лайăх хакланине палăртрĕç. Апла пулин техăшпĕр кăтартусене лайăхлатмалли пирки, вĕсене лайăхлатма майĕсем те, сотрудниксен ăсталăхĕ те çителĕклине асăнса хăварчĕç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Апрелĕн 14-мĕшĕнчи суйлав итогĕсем

# Тивĕçлисемшĕн сасăлана

***2013 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче пирĕн районта Ярапайкасси тата Çатракасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен вăхăт тухмасăрах иртерекен суйлавĕ пулчĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕнче списока кĕртнĕ суйлавçăсен 69,52 процентĕ, Çатракасси ял тăрăхĕнче 70,02 процентĕ сасăлава хутшăннă.***

## Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлана

**Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2013 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнчи 82/1 № йышăнăвĕнчен**

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăнчĕ:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.
2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах иртерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.
3. Николай Витальевич Павлов Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 1660.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 915.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 239.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 21.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 1133.

Кандидатсем сасă пухнă:

Эльвира Михайловна Алексеева – 333 (28,86 процент).

Марина Дмитриевна Николаева – 52 (4,51 процент).

**Николай Витальевич Павлов – 743 (64,38 процент).**

Денис Павлович Фролов – 5 (0,43 процент).

## Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлана

**Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2013 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнчи 82/2 № йышăнăвĕнчен**

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăнчĕ:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.
2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах иртерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.
3. Геннадий Вениаминович Трофимов Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 1911.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 1076.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 262.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 51.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 1287.

Кандидатсем сасă пухнă:

**Геннадий Вениаминович Трофимов – 1210 (90,43 процент).**

Александр Сергеевич Федоров – 77 (5,75 процент).

Сасăлав

# Пирĕн паллă вырăнсем пурах

Çĕр-шыври уйрăмах паллă вырăнсене суйласа илессипе 10russia сайтра сасăлав иртереççĕ. Чăваш Енрен Раççей чи лайăх символĕсен ятне тивĕçме пултараканнисен шутне арçынсен Свято-Троицки мăнастирне, Шупашкар заливне, «Чăваш вăрманĕ» Наци паркне, хĕрарăмсен Тихвински Богородицки мăнастирне, СССР космонавт летчикăн А.Г. Николаевăн мемориал комплексне, Чăваш наци музейне, В.И. Чапаев музейне, Шыгырдан ялĕнчи собор мечĕтне, çавăн пекех «Присурский» заповедникне кĕртнĕ. Республикăра пурăнакансем сайтра регистрациленмесĕрех сасăлама пултараççĕ. Чи нумайăн – 24 сехет хушшинче пĕр IP-адресран виçĕ хут.

«Россия 10» мультимеди конкурс проектне «Россия 1» телеканалпа Вырăс географи обществи пĕрле иртереççĕ. Конкурса хутшăнма çĕршывĕпе пĕтĕмпе 700 ытла объект суйласа илнĕ. Проектăн тĕп задачи – пĕтĕм халăх сасăлавне иртерсе куçпа пăхса сăнанипе Раççейăн çĕнĕ 10 символне суйласа илесси.

Пĕрремĕш тапхăр июнĕн 30-мĕшĕччен пырать. Çавăн чухне чи интереслĕ паллă вырăнсене федераци кашни округĕнчен вуншар суйласа илеççĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕччен 80 çĕнтерӳçĕрен чи лайăххисене 30 палăртаççĕ. Финал сентябрĕн 29-мĕшĕнче вĕçленет, ун чухне çĕнтерӳçĕсем 10 кăна юлаççĕ. Çĕр-шывăн тĕп символĕсене миниатюрăра туса хатĕрлесе «Россия» ландшафт паркĕнче вырнаçтараççĕ. Ку парка Мускав облаçĕнче йĕркелеççĕ.

Чăваш Енре пурăнакансем активлă пулнинчен пирĕн республика туризмшăн илĕртӳллĕ регионсем шутне лекесси килет. Апла пулсан проекта хутшăнса хамăр республикăри паллă вырăнсемшĕн сасăлар!

# 95-ре те ватăлма пĕлмест Мари аки

Вăл е ку йывăрлăх сиксе тухсан тепĕр чух наччас ал усăнать пирĕн. Çапла вĕт, вулаканăм? Мăн Шаптакра пурăнакан М. Александрова вара çакăн йышшисенчен мар.

– Паянхи пурнăç çинчен мĕн шухăшлатăр? Атту хăшĕсем йывăр, йывăр, теççĕ, – ыйтрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Мария Александровнăран тыл ĕçченĕ черетлĕ çуралнă кунне паллă тунă кун.

– Паянхи пурнăç ăçтан йывăр пултăр? Эп йывăррине курман та, – çамрăк чухнехи пек çавăрттарса хучĕ кинеми.

Иртнĕ эрнере шăп та лăп 95 çул тултарчĕ вăл. Çав ятпа ăна Ростислав Николаевич район администрацийĕ ячĕпе чунран тухакан ăшă сăмахсемпе саламларĕ. РФ Президенчĕн В. Путинăн салам открыткине панă хыççăн район администрацийĕн Тав çырăвĕпе, чĕрĕ чечек çыххипе тата асăнмалăх парнепе чысларĕ.

–Тавах сире Аслă Çĕнтерĕве çывхартас тесе тылра ырми-канми ĕçленĕшĕн. Вăрçă хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимленĕшĕн, – терĕ Ростислав Николаевич юбиляра.

Ах, йывăр, йывăр, тесе нăйлатма вара Мари аки (çапла чĕнеççĕ Мария Александровнăна ялта) хăнăхман. Çамрăк чухнех чунĕпе те çирĕпчĕ вăл, кĕлеткипе те. Нимле ĕçрен те хăраса тăмастчĕ. Çулталәк çурăрах ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнăскере ытлашши хĕрхенсех тăман пуль çав шăпа. Çавăнпа та вăрçă вăхăтĕнче чи йывăр ĕçсене те Марийăна яратчĕç. Ытти облаçсенче кĕпер тумалла-и е чукун çул хумалла, е тата Атăл леш енче вăрман касмалла – арçынсемпе тан ĕçлетчĕ хĕр.

Çĕнтерӳ хыççăн та ĕмĕр тăршшĕпех колхозра ĕçлерĕ: бригадăра, фермăра. Аслă ăрури çынсем кăна мар, вăтам çулсенчисем те лайăх астăваççĕ пулĕ, ун чухне фермăра чи ятлă-сумлă çынсем çеç ĕçлетчĕç. Вăт шăпах çавăн пек çын пулнă Мария Александровна.

Пулнă тесен тĕрĕсех пулмасть-ха. Паян та чи хисеплĕ çынсенчен пĕри вăл.

Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М. Колесникова каланă тăрăх, ял уявĕ иртет-и е урăхла праçник – Мари акисĕр пуçламаççĕ уява. Кĕрекере те чи сумлă вырăнта вăл.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи В. Аникина каланă пек, пирĕн Мари пек çирĕп çынсенчен пурăнма та, ĕçлеме те вĕренмелĕх пур.

Паян та мал ĕмĕтпех пурăнать тыл ĕçченĕ. Çу кунĕсене питĕ кĕтет.

– Анкартине тухса ларатăп та, акă, шăналăк çĕлеме пуçлатăп. Утă турттарнă чух çав тери меллĕ унпа, – тет Мари аки.

Апла пулсан «Чувашия –Поддержка» страхлакан компанин пирĕн районти представительствин ертӳçи Ф. Кирпичникова парнеленĕ çĕмăта та кирлĕ пулать-ха кинемие. Ĕçлĕ çу кунĕсем хăвăртах иртсе кайĕç.

Ку таранччен вара вăл анкартинче те çамрăксемпе тан ĕçленĕ.

– Çĕр улми пуссине çумласа вĕтĕ улмана та пуçтарса ĕлкĕрсе тăрать. Тулли шыв витрине те йăтма пăрахман-ха, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн куçарса пырать,– тет ун пирки тăхлачи Н. Васильева.

Шел пулин те, пĕртен пĕр ывăлне амăшĕн – Мари акин пытарма лекрĕ. Ку хуйха никамăн та курмалла ан пултăрччĕ. Мари аки вара паян мăнукĕн çемйипе хăйĕн тăван килĕнче пурăнать. Кирилпа Алеша прамăнукĕсем çумра чух вара вăл çунат хушать тейĕн.

– Ман кĕрӳ те «мировой», – тет Мария Александровна.

Мари аки районта, республикăра мĕн пулса иртнине йăлт пĕлсе тăрать.

Ахлатса, сăмса усса ларас кăмăл та çук унăн. «Хĕлхем» артисчĕсем юрă хыççăн такмак каламма пуçласан ташша яра пачĕ Мари аки. Тепĕр çамрăк çын та ун пек ташлаяс çук. Вăт мĕнле пулмалла пирĕн.

– Ман пекех 95 çула çитмелле, унран та иртмелле пултăр, – терĕ кинеми хăнасене ăсатнă май.

Унччен вара çĕр çĕмĕрттерсе çӳремелĕх вăхăт пур-ха. Çапла вĕт, вулаканăм?

**Л. ПАВЛОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**



# Министрсене хакланă

Рейтинг

**Раççейре пурăнакан халăхăн шухăш-кăмăлне ыйтса тĕпчекен центр (ВЦИОМ) пилĕк баллă системăпа çĕр-шыв Правительствин членĕсен ĕç-хĕлне мĕнле хак панине тишкерĕ.**

Кунта пĕтĕмпех шкулти пек: 1 – япăх, 5 – лайăх. Каярахпа социологсем кашни министрăн вăтам балне палăртнă. Питĕ маттурри е пачах ĕçлеме пултарайманни тупăнман. Чи пысăк хаклава оборона министрĕ Сергей Шойгу тивĕçнĕ. Вăл – «4» паллăран çӳлерех хаклавлă пĕртен пĕр çын. Пĕлтĕрхи авăн уйăхĕнче иртнерĕ ыйтăмра халăх унччен çак должноçри Анатолий Сердюкова «3» паллă кăна лартнăччĕ. Ют çĕр-шыв ĕçĕсем министрĕ Сергей Лавров кăшт çеç «4» илеймен – вăл 2-мĕш вырăн йышăннă. Правительствăн тепĕр 13 министрĕн «дневникĕнче» «2+» паллă вырăн тупнă. Чи хыçалти йĕркере – вĕренӳпе наука министрĕ Дмитрий Ливанов.

| | 2012, авăн | 2013, пуш |
|---|---|---|
| Сергей Шойгу, оборона министрĕ | – | 4,19 |
| Сергей Лавров, ют çĕр-шыв ĕçĕсен министрĕ | 3,90 | 3,94 |
| Владимир Пучков, МЧС пуçлăхĕ | 3,42 | 3,54 |
| Дмитрий Рогозин, вице-премьер | 3,36 | 3,40 |
| Николай Никифоров, çыхăнупа массăллă коммуникацисен министрĕ | 3,36 | 3,25 |
| Дмитрий Козак, вице-премьер | 3,27 | 3,23 |
| Александр Хлопонин, вице-премьер | 3,17 | 3,21 |
| Владимир Колокольцев, шалти ĕçсен министрĕ | 3,14 | 3,2 |
| Виктор Ишаев, Инçет Хĕвел тухăç аталанăвĕн министрĕ | 3,25 | 3,18 |
| Игорь Шувалов, пĕрремĕш вице-премьер | 3,32 | 3,17 |
| Виталий Мутко, спорт, туризм тата çамрăксен политикин министрĕ | 3,13 | 3,06 |
| Ольга Голодец, вице-премьер | 2,91 | 3,06 |
| Михаил Абызов, Уçă правительствăпа çыхăну тытакан министр | 2,89 | 3,05 |
| Аркадий Дворкович, вице-премьер | 3,04 | 3,04 |
| Владимир Мединский, культура министрĕ | 3,15 | 3,03 |
| Игорь Слюняев, регионсен аталанăвĕн министрĕ | 2,86 | 2,98 |
| Максим Соколов, транспорт министрĕ | 3,06 | 2,97 |
| Сергей Донской, çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ | 2,74 | 2,97 |
| Владислав Сурков, вице-премьер | 3,05 | 2,96 |
| Александр Новак, энергетика министрĕ | 3,12 | 2,92 |
| Андрей Белоусов, экономика аталанăвĕн министрĕ | 2,83 | 2,91 |
| Александр Коновалов, юстици министрĕ | 3,20 | 2,87 |
| Антон Силуанов, финанс министрĕ | 2,83 | 2,86 |
| Максим Топилин, ĕç тата социаллă хӳтлĕх министрĕ | 2,72 | 2,78 |
| Денис Мантуров, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ | 3,05 | 2,77 |
| Вероника Скворцова, сывлăх сыхлавĕн министрĕ | 2,79 | 2,75 |
| Николай Федоров, ял хуçалăх министрĕ | 2,72 | 2,68 |
| Дмитрий Ливанов, вĕренӳпе наука министрĕ | 2,85 | 2,60 |

Спорт

## Кубок – тĕп больница командинче

Аллăран иртнĕ арçынсем шăмат кун «Сывлăха» хайсен сывлăхне «тĕрĕслеме» пухăнчĕç. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕн кубокне çĕнсе илессишĕн йĕркеленĕ ăмăртăвăн хăйне май пĕчĕк юбилейĕ пулчĕ. В. Данилов тĕп врач ăмăрту пиллĕкмĕш хут иртнине пĕлтерчĕ. «Паллах, çак ăмăртăва вăйлисене тупса палăртас тĕллевпе мар, сывă пурнăç йĕркине тытни пире нумайрах пурăнма тата сывлăхлă пулма май панине кăтартса парас тесе, сывă пурнăç йĕркине сарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Нумайрах пурăнасси вара кашнинчен хăйĕнчен килет», – çакна палăртса Владислав Григорьевич юбилей ăмăртăвне хутшăнакан кашни арçынна ятарласа хатĕрленĕ блокнотпа ручка парса саламларĕ.

Ăмăртăва пухăннисене район пуçлăхĕ И. Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та саламларĕç. «Владислав Григорьевич спортра пуçарулăхпа палăрса тăрать. Ку ăмăртăва аслисем хутшăнаççĕ пулсан, кĕркунне вара Тойкилтĕре вăл йĕркелесе янă ăмăртăва шкул ачисем хутшăнаççĕ. Апла пулсан вăл профилактика ĕçне те пур ӳсĕмрисемпе пурнăçлать», – тесе палăртрĕ Р. Тимофеев.

Аллăран иртнисен командисенчен пĕлтĕр ку ăмăртура «Сурăм» команда çĕнтернĕччĕ. Вăл кăçал та ăмăртăва хаваспах хутшăнчĕ. Унсăр пуçне пилĕк команди, «Передовик», Ильич ячĕпе хисепленкен хуçалăхсен, Чуманкасси ял тăрăхĕн тата Шаптак ялĕн командисем хутшăнчĕç. Ултă командăран вăйлине тупса палăртассипе спорта юратакан арçынсем тĕттĕм пуличченех ăмăртрĕç. Кăçал районти тĕп больницăн команди çĕнтерме пултарчĕ.




## Орининсем вăйлăрах

Районти организацисемпе учрежденисен, предприятисен, ял тăрăхĕсен командисен спартакиади шучĕпе шахмат вăййисем иртнĕ. Тăватă команда кăна – «Юнга» физкультура клубĕ, «Оринино», Шетмĕпуç тата Хорнуй ял тăрăхĕсен командисем – хутшăннă пулин те, вăйăсем интереслĕ иртнĕ. «Оринино» кубока тата диплома тивĕçнĕ.

## Ачасем те, аслисем те маттур

Физкультурăпа спорт комплексĕ уçăлнăранпа Муркашсемшĕн спортăн тепĕр енĕ те «уçăлчĕ»: ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче ăсталăха туптакансем шывра ишессипе республика шайĕнче лайăххисен шутĕнче.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче «Сывлăхри» бассейнра шкул ачисем ăмăртнă. Ăмăртăва Шупашкар районĕнчи спортсменсем те хутшăннă. Хутăш эстафета, комплекслă ишев, ирĕклĕ майпа ишесси – ăмăрту программине çак енсене кĕртнĕ.

Муркаш ишевçисем тĕрлĕ ӳсĕмсенче призлă вырăнсене йышăнма пултарнă. Лев Кольцов, Дмитрий Данилов, Андрей Иванов, Евгений Григорьев, Ирина Григорьева, Наталия Потапова уйрăм дистанцисенче малтисен ретне лекме пултарнă.

Кĕçĕннисен ӳсĕмĕнчи хутăш эстафетăра 1-мĕш вырăна Шупашкар районĕн команди тухнă, 2-мĕш вырăнта – Чуманкассинчи, 3-мĕш вырăнта – Çатракассинчи вăтам шкулсен командисем.

Аслисен ӳсĕмĕнче мала Муркашри вăтам шкулăн команди мала тухнă, 2-мĕш вырăнта – Шупашкарсем, 3-мĕшĕнче – Чуманкассинчи вăтам шкул. Пĕтĕмĕшле кăтартусемпе те малти вырăнсене çак командăсемех пайланă: малта – кӳршĕ районăн команди, иккĕмĕш – Муркашсем, виççĕмĕш – Чуманкассисем.

Çав кунах бассейнра аслисен ăмăртăвĕ иртнĕ. 2 арçынпа 2 хĕрарăмран тăракан ушкăнсем хутăш эстафетăра тупăшнă. Кунсăр пуçне арçынсем 100-шер метр кроль тата брасс мелĕсемпе ишсе ăмăртнă. Хĕрарăмсем уйрăм стартра çак мелсемпех 50-шар метр ишсе тупăшнă.

Ирĕклĕ майпа ишсе хĕрарăмсенчен Марина Смирнова, Ольга Петрова тата Светлана Матвеева палăрнă, брасс мелĕнче малти икĕ вырăна çав хутшăнакансемех тивĕçнĕ, виççĕмĕшĕ Надежда Смирнова пулнă.

Ирĕклĕ майпа ишсе арçынсенчен Игорь Смирнов мала тухнă, 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсенче – Сергей Алексеев тата Сергей Васильев. Брасс мелĕпе те çаксемех палăрнă: 1-мĕш вырăнта – Сергей Алексеев, 2-мĕш вырăнта – Игорь Смирнов, 3-мĕшĕнче – Сергей Васильев.

Командăсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕпе мала Хорнуй ял тăрăхĕ тухма пултарнă, хыççăнхи вырăнсенче – «Оринино» тата «Свобода».

# Хыҫра – виҫĕ уйăх

Цифрăсен чĕлхипе

***Районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕн кăҫалхи январь – март уйăхĕсенчи кăтартăвĕсем***

**ПРОМЫШЛЕННОҪ**

Ҫулталăк пуҫланнăранпа районти промышленноҫ предприятийĕсем япăх мар ĕҫленĕ. Январь – март уйăхĕсенче пĕтĕмпе 529966,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă тата пулăшу ĕҫĕсем пурнăҫланă. Ку вăл иртнĕ ҫулхи ҫав вăхăтрипе танлаштарсан 105,2 процент пулать. Кăҫалхи пĕрремĕш квартала пĕлтĕрхи ҫав вăхăтрипе танлаштарсан пысăкрах кăтартусемпе вĕҫленисем шутĕнче Муркашри кирпĕч завочĕ (22951 пин тенкĕ – 329,6 процент), «Моргауши – Хлеб» ООО (8159 пин тенкĕ – 138,5 процент), «Сундырь – Хлеб» ООО (7753 пин тенкĕ – 109,2 процент), «Моргаушавтотехсервис» ОАО (850 пин тенкĕ – 101,8 процент), «Сеспель» ЗАО (402190 пин тенкĕ – 101,9 процент), «Моргаушская» МСО (8500 пин тенкĕ – 121,4 процент). Ҫав вăхăтрах «Моргаушкорм» ООО кăтартăвĕ – 325 пин тенкĕ (77,8 процент).

**ТӲЛЕВЛĔ ПУЛĂШУ ĔҪĔСЕМ**

Тӳлевлĕ пулăшу ĕҫĕсем пурнăҫласси ӳснĕ, пĕтĕмпе вĕсене 15381,7 пин тенкĕлĕх пурнăҫланă. Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхăн ертсе пыракан компанийĕпе (93,3 процент) «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ (69,6 процент) вара хăйсен ĕҫ кăтартăвĕсене чакарнă, пулăшу ĕҫĕсене 4565,6 пин тата 1041 пин тенкĕлĕх пурнăҫланă.

**ВАККĂН ТАВАР СУТАССИ**

Икĕ райпо коллективĕ те ӳсĕмлĕ ĕҫлеҫҫĕ. Январь – март уйăхĕсенче Мăн Сĕнтĕрсем 60923 пин тенкĕлĕх (114 процент), Муркашсем 112383,2 пин тенкĕлĕх (107,3 процент), сутуилĕвĕн ытти предприятийĕсем 13633 пин тенкĕлĕх (111,7 процент) тавар сутнă. Районĕпе пĕтĕмпе 186939,2 пин тенкĕлĕх е иртнĕ ҫулхи ҫав вăхăтринчен 9,7 процент нумайрах тавар сутнă.

**ОБЩЕСТВĂЛЛА АПАТЛАНУ**

Обществăлла апатлану предприятийĕсем хăйсен умĕнчи тивĕҫне ответлăха туйса пурнăҫласа пынине палăртмалла. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе пĕтĕмпе апат-ҫимĕҫ продукцийĕпе 23117,6 пин тенкĕлĕх (114,3 процент) тивĕҫтернĕ. Кăтартусем Мăн Сĕнтĕр райповĕнчи обществăлла апатлану предприятийĕсен 12118 пин тенкĕ е пĕлтĕрхи ҫав вăхăтрипе танлаштарсан 112,3 процент, Муркаш райповĕн предприятийĕсен – 10782 пин тенкĕ (116,9 процент).

**ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕССИ**

Кăҫалхи январь – март уйăхĕсенче усă куракан кашни 100 гектар ҫĕр пуҫне районĕпе 13,7 центнер (79,7 процент), вăл шутран ял хуҫалăх предприятийĕсенче 7,2 центнер (98,6 процент) аш-какай, 140,2 центнер (103,3 процент), вăл шутран ял хуҫалăх предприятийĕсенче 57,2 центнер (100,9 процент) сĕт туса илнĕ.

Аш-какай пĕтĕмпе 863,3 тонна (79,7 процент) туса илнĕ. Кăтартусем ял хуҫалăх предприятийĕсен те (98,6 процент), килти хушма хуҫалăхсен те (72,9 процент), хресчен (фермер) хуҫалăхĕсен те (86,5 процент) чакнă.

Сĕт сăвасси 3,3 процент ӳснĕ, 8831,7 тоннăпа танлашнă. Ял хуҫалăх предприятийĕсенче 2135,6 тонна (100,8 процент), килти хуҫалăхсенче 6591,4 тонна (104,3 процент), хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче 104,7 тонна (90 процент) сĕт суса илнĕ.

Районĕпе кашни ĕне пуҫне вăтамран 1053 килограмм (118,4 процент), вăл шутран ял хуҫалăх предприятийĕсенче 1005 килограмм (101,7 процент) сĕт суса илнĕ.

Самăртма хупнă ушкăнри мăйракаллă шултра вылăхсем талăкра вăтамран 588 грамм (104,6 процент), сыснасем 300 грамм (74,1 процент) ӳт хушнă. Виҫĕ уйăх хушшинче пĕтĕмпе 799 пуҫ (142,9 процент) пăру, 1488 пуҫ (50,1 процент) ҫура илнĕ. Пĕр чăх пуҫне вăтамран 79 чĕпĕ илнĕ (106,8 процент).

**ВЫЛЬĂХСЕН ЙЫШĔ**

Пĕтĕмĕшле илсен чăх-чĕпсĕр пуҫне пур йышши выльăхсен йышĕ те районта чакса пырать. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне мăйракаллă шултра выльăхсем 15874 пуҫ (93,2 процент), вăл шутра ĕнесем 8391 пуҫ (87,2 процент), сыснасем 7038 пуҫ (69,3 процент), сурăхсемпе качакасем 9786 пуҫ (89,2 процент), лашасем 84 пуҫ (75,7 процент), чăх-чĕп 370,5 пин пуҫ (104,1 процент) шутланнă.

**ĔҪ РЫНОКĔ**

Районта ĕҫсĕрлĕх шайĕ 0,26 процентпа танлашать. Пĕтĕмпе 52 ҫынна ĕҫсĕррисен шутне илнĕ. Иртнĕ ҫул ҫак вăхăта ĕҫсĕррисем 55 ҫын пулнă.

**Н. КОСТИНА,**
**район администрацийĕн экономика тата агропромышленноҫ комплексне аталантарассин пайĕн пуҫлăхĕ.**

Ял хуҫалăхĕ

# Паха вăрлăх – тухăҫ ҫăл куҫĕ

Ҫурхи хĕвел кунран-кун хĕрӳленсе пырать, ака-суха тапхăрĕ пуҫланассине систерет. Апла пулсан ҫĕр ĕҫченĕшĕн кашни самант пĕлтерĕшлĕ: вăрлăх янтăламалла, ыттине хатĕрлемелле, тĕрĕсрех каласан вара – ҫур акине хатĕрленессин юлашки тапхăрĕ. Пысăк тупăш илесси вăрлăх пахалăхĕпе тачă ҫыхăннă, начаррипе ĕҫлени вара – вăхăта сая яни ҫеҫ.

Суту-илӳ точкисем садпахчаҫăсене тĕрлĕ вăрлăх сĕнеҫҫĕ. Сентре ҫинчи тавар хушшинче вара Ульяновск, Ростов облаҫĕсенчен, Тутар Республикинчен, Краснодар, Ставрополь тăрăхĕсенчен кӳрсе килнисем те пур. Асăннă регионсенче ял хуҫалăх культуришĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăратакан сиенлĕ ҫум курăкĕсем (амброзия полыннолистная, амброзия трехраздельная, амброзия многолетняя, горчак ползучий, паслен колючий, паслен трехцветковый, повилики, ценхрус малоцветковый, череда волосистая) анлă сарăлнă. Ҫак тăрăхсене карантин зонине кĕртнĕ.

Ҫӳлерех асăннă ӳсентăран ял хуҫалăх культурине вăйсăрлатать, вăрлăхне пахалăхсăрлататать, ҫавăн пекех выльăх апачĕн пахалăхне те палăрмаллах начарлатать. Унсăр пуҫне ҫын сывлăхĕшĕн те сиенлĕ. Тĕслĕхрен, амбрози чечекĕн тусанĕ аллерги чирне пуҫарать.

Сиенлĕ ӳсен-тăран пирĕн уй-хирте, сад-пахчара ешермессе вара никам та ҫирĕплетеймест, ҫавăнпа та кунта асăрханулăхсыхлăх кирлĕ. Вĕсем пирĕн тăрăхшăн чăннипех те хăрушă. Аякран илсе килнĕ ял хуҫалăх культурисен вăрлăхĕсемпе усă курма ан тăрăшăр. Тĕрлĕ сăтăрҫă пирĕн тăрăхра та ĕрчесе кайсан пысăк тухăҫ пирки ĕмĕтленни кăлăхах пулĕ. Сиенлĕ ӳсен-тăрана пĕтерме вара питĕ йывăр. Ҫĕнĕ тата пулăхлă ҫĕр ҫинче вĕсем аван аталанаҫҫĕ.

Ял хуҫалăх культурисен вăрлăхĕсене кӳрсе килекен, вĕсемпе суту-илӳ тăвакан хăш-пĕр ĕҫченĕн фитосанитари документчĕсем те ҫук. Ҫакăнта вара карантин объекчĕ пулманнине ҫирĕплетеҫҫĕ. Ҫак документ Чăваш Республикине хăрушă ӳсен-тăран кӳрсе килесрен сыхлать.

Сутлăхра вара селекци ҫитĕнĕвĕсен патшалăх реестрне кĕртмен вăрлăх сорчĕсем те пулма пултараҫҫĕ. Тĕслĕхрен, сире сĕнекен йышши сорт ҫут ҫанталăкра пачах та ҫук. Вăрлăха хăвăр ытти ҫул туяннă лавккасенчен илме тăрăшăр. Пахалăхлă вăрлăх туянас пулсан ятарлă лавккасене кăна каймалла. Вăрлăх пакечĕ ҫинче тулли информаци кирлĕ (фирма ячĕ, адресĕ; культурăн ятарлă реестртра палăртнă ячĕпе сорчĕ; парти номерĕ тата ытти те).

Хисеплĕ ҫĕр ĕҫченсем, тĕрлĕ пăтăрмахран сыхланма тăрăшăр, апла пулсан сутуҫăран карантин сертификатне, ҫавăн пекех «Россельхозцентр» ФГУ панă сорт сертификатне ыйтма ан именĕр. Сăтăрҫăсенчен сыхланни унран хăтălма тăкакланнинчен вырăнлăрах. Хăвăра кăсăклантаракан ыйтусемпе пирĕн управление пырса е 52-80-33 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

**Р. АСЕИНОВ,**
**Раҫҫей ял хуҫалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн пай пуҫлăхĕн ҫумĕ.**

# «Арҫын тивĕҫĕ – ҫар службинче тăрасси»

Ҫурхи призыв

***Салтак аттине тăхăнма вăхăт ҫитнĕ ҫамрăксемшĕн хĕрӳ тапхăр пырать: апрелĕн 1-мĕшĕнче ҫуркуннехи призыв кампанийĕ пуҫланчĕ. Ҫавна май паянхи калаҫăва Чăваш Республикин Ҫар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн ертӳҫине Александр КОЧУРОВ полковника чĕнтĕмĕр.***

**– Александр Алексеевич, ҫурхи призывпа икĕ районтан миҫе яша ҫара ăсататăр?**

– Малтанласа палăртнă тăрăх икĕ районти 130 яхăн каччăн ҫак призыв кампанийĕ вăхăтĕнче Раҫҫей Ҫарĕн ретне тăмалла. Ытти ҫулсенчи пекех ку йышран ытларахăшĕ – 70–75 проценчĕ Муркаш районĕнчен. Ҫара каякансенчен 80–90 проценчĕ специалист пулмалли те пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, водительсем, водитель-электромеханиксем, трактористсем те, ыттисем те. Хальхи вăхăтра ҫара каякансене шăпах специалист пулнине шута илсе суйласа илеҫҫĕ.

Эпир хамăр енчен илес пулсан та призывниксене вĕренме яратпăр. Акă С, Д, Е категори водитель специальноҫне алла илме ҫамрăксене вĕренме янă ĕнтĕ. Вĕсем тӳлевсĕр вĕренеҫҫĕ. Кунсăр пуҫне тата ҫул укҫине те саплаштараҫҫĕ. Ҫак призывник ҫара кайсан саплаштарнă укҫа-тенкĕне унăн ашшĕ-амăшĕ илет.

Сăмах май каласан хулари медицина комиссийĕн тĕрĕслевне кайса килме тăкакланă укҫа-тенкĕне те саплаштарма май пур. Ҫакна валли заявлени ҫырмалла тата кайса килнине ҫирĕплетекен билетсем – вокзалта илнисем – пулмалла.

**– Медицина комиссийĕ тенĕ май, призывниксен сывлăхĕ пирки пĕтĕмĕшле мĕн калама пултаратăр?**

– Республикипе призыв ӳсĕмĕнчи ҫамрăксен 70 проценчĕ ытларах ҫара кайма юрăхлă тесе палăртаҫҫĕ пулсан, пирĕн яшсен ку кăтарту 66,4 процентпа танлашать. Ҫапла вара сывлăх мĕнле шайра пулни курăнать. Сывлăх ҫине, ӳт-пӳ аталанăвĕ ҫине те тимлĕх ытларах уйăрмалине калать ĕнтĕ ҫакă. Тен чирсене лайăххăх тупса палăртаҫҫĕ?.. (**Ред.**: шӳтлесе калать полковник.)

**– Муркаш каччисем хăш регионсенчи ҫар чаҫĕсенче служба тăрĕҫ?**

– Ку тĕлĕшпе территори географийĕ питĕ анлă: Калининградран пуҫласа Хабаровск таранах. Муркаш каччисен служба Мускавра, Мускав облаҫĕнче, Хусанта тата ытти хăшпĕр регионсенче иртесси те паллă.

**– Призыв кампанийĕ малтанхипе танлаштарсан самаях тăсăлчĕ.**

– Ҫурхи призыв кампанийĕ июлĕн 15-мĕшĕччен пырать. Ку ăнсăртран тунă утăм мар паллах. Аслă шкулсенчен вĕренсе тухакансем алла диплом илме ĕлкĕреҫҫĕ. Хальхи требованисемпе ҫара каякансенчен аслă пĕлӳ илнисем 18 процентран сахал мар пулмалла.

**– Салтак аттине тăхăнассинчен пăрăнакансем те пур пулĕ-ха?**

– Паянхи куна районта ҫакăн пек «правур» каччăсем вунна яхăн. Ҫар ретне тăрассинчен хăраса ҫар коммиссариатне килмеҫҫĕ, повесткăсем те илмеҫҫĕ. Ашшĕ-амăшĕ те вĕсем пирки пĕлтермест. Ачисемпе пĕрлех хăйсем те саккуна пăснине вĕсем ăнланасшăн мар курăнать. Эпир вара Шалти ĕҫсен министерствин районти пайĕпе ҫыхăнса вĕсене шыраса тупас тата ҫар ретне тăратас тĕллевпе саккунлă майсемпе усă курса ĕҫлетпĕр.

Ҫакăнтах призыв ӳсĕмне кĕрекен ҫемьеллĕ арҫын тата вĕсен ачи пур пулсан та унăн ҫара каймаллине каласа хăварас килет. Арҫын ҫара кайсан унăн мăшăрне – пулас амăшне – пĕр хутчен тӳлекен пособи 20 пин тенкĕ ытла параҫҫĕ, кунсăр пуҫне ҫемьере ача ҫуралнă пулсан патшалăх кашни уйăхра 8 пин тенкĕ ытла ача-пăча пособийĕ тӳлесе тăрать.

**– Призывник ҫемьере ватă ашшĕ-амăшĕн пĕртенпĕр тăрантараканĕ пулсан?**

– Ҫак ыйтăва та, отсрочка е альтернативлă служба пирки тата ытти ҫакăн майлă ыйтусене те пĕтĕмпех призыв комиссийĕ пăхса тухать. Ҫар комиссариачĕ ăна хăй тĕллĕн кăна татса пама пултараймасть. Пирĕн районта та 8 ҫынран тăракан призыв комиссийĕ ĕҫлет.

**– Салтака ăсатнă каччă хăш вăхăтран пуҫласа чăнах та салтак пулса тăрать?**

– Салтак тумтирне каччăсем Канашри пункта тăхăнаҫҫĕ, унтах вĕсене ытти мĕн пур кирлĕ хатĕрпе тивĕҫтереҫҫĕ. Салтака командăна йышăнаҫҫĕ, вăл поезд ҫине ларса ҫула тухать – ҫак самантран унăн салтак прависемпе тивĕҫĕсем пуҫланаҫҫĕ.

**– Салтакăн срочнăй службăра тăнă чухнех контракт ҫырма май пур-и?**

– Срочнăй служба 3–4 уйăх иртнĕ хыҫҫăн, унти йĕркене, хутшăнусене ăнланса илнĕ хыҫҫăн салтак малашне валли контракт ҫырма пултарать. Кун пек тĕслĕх пирĕн пĕлтĕр те пулнăччĕ. Контракт ҫырас пирки ҫар комиссариачĕсем те, ҫар чаҫĕнче те тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пулать.

**– Александр Алексеевич, эсир пурнăҫра пуян опыт пухма ĕлкĕрнĕ ҫын, анлă та тарăн тавракурăмлă ертӳҫĕ. Сирĕн шутпа ҫарта службăра тăни арҫыншăн мĕнпе пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать?**

– Тавах ырă сăмахсемшĕн. Ҫар, ман шутпа, чи малтанах, коллективра пурăнма пĕлеслĕхе парать. Ҫакă вара пурнăҫра самаях пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп. Ҫынпа хутшăнма пĕлни, ытти наци ҫыннисемпе юнашар пулса вĕсемпе хутшăнма пĕлни те, ӳт-пĕве пиҫĕхтерни те арҫыншăн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Дисциплина, тирпейлĕх, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчи пуянлăх – ҫакă та ҫарпа ҫыхăннă. Ҫарта илнĕ специальноҫ кайран гражданкăра пулăшать. Сăмахран, ҫарти связистсем, шифрсемпе ĕҫлекенсем киле таврăнсан банксене, шалти ĕҫсен органĕсене, Федераци хăрушсăрлăх службине те ĕҫе вырнаҫма пултараҫҫĕ. Тепĕр саманта та асăнса хăварас килет. Ҫемьеллĕ пулсан каярах ывăла: «Эпĕ ҫарта службăра тăнă, унран пăрăнса юлман», – тесе мăнаçлăн калама пултарни.

Ҫар службинчен нимĕн те хăрамалли ҫук. Пирĕн умĕн те миллионшар ҫын ҫара кайнă, пирĕн хыҫҫăн та ҫара каякан пулать. Мĕншĕн тесен арҫын тивĕҫĕ – ҫар службинче тăрасси, хĕрсен – кĕтесси тата юратасси.

**– Тавах интереслĕ калаҫушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

ГИБДД аса илтерет

# Штрафсене вăхăтра тӳлемелле

Раҫҫей Федерацийĕн Административлă право нормисене пăснин кодексĕн 32.2 статйипе килĕшӳллĕн административлă штрафа постановлени саккунлă вăя кĕнĕренпе е отсрочка панă хыҫҫăнхи кунран 30 кунтан кая юлмасăр тӳлемелле.

Ҫул ҫитменнисен ĕҫлесе илнĕ укҫа ҫук пулсан ҫак штрафа унăн ашшĕ-амăшĕнчен е унăн саккунлă представителĕсенчен шыраса илеҫҫĕ.

Административлă штрафа банкра е урăх кредит организацийĕнче тӳлемелле. Муркашра, сăмахран, Перекет банкĕн хушма офисĕнчи, район администрацийĕн ҫуртĕнчи, «Универмаг» суту-илӳ центрĕнчи терминалсем урлă та штраф тӳлеме май пур.

Штраф тӳленине ҫирĕплетекен квитанци копине постановлени кăларнă органа (суд, должноҫри ҫын, йĕркелĕхе сыхлакан орган) тăратмалла.

30 кун хушшинче штраф тӳленине ҫирĕплетекен документ тивĕҫлĕ органта пулмарĕ пулсан материалсем пухса суд приставĕсем патне ярса параҫҫĕ. Ку документсемпе пĕрлех – штрафа вăхăтра тӳлеменшĕн административлă протокол та. Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн суд приставĕсем ҫак штрафа шыраса илеҫҫĕ.

Кодексри 20.25 статьяра ҫырса кăтартнă тăрăх административлă штрафа вăхăтра тӳлеменшĕн унăн калăпăшĕнчен икĕ хут пысăкрах штраф, анчах та 1 пин тенкĕрен сахал мар тӳлеме тивет. Е тата гражданина вун пилĕк кунччен арестлеме ирĕк пур.

Ҫакăнта аса илтернине шута илсе административлă штрафсене вăхăтра тӳлĕр. Ҫул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăсассипе ҫыхăннă административлă штрафсене те вăхăтра тӳленине нимĕн те ҫитмест.

**С. ИВАНОВ,**
**шалти ĕҫсен районти пайĕн ҫул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн пуҫлăхĕ.**

***РЕДАКЦИРЕН: материала пичете хатĕрленĕ кунсенче шăпах административлă штрафа тӳлессипе ҫыхăннă «Об исполнительном производстве» Федераллă саккуна тата Раҫҫей Федерацийĕн ытти саккунĕсене улшăнусем кĕртесси ҫинчен» 2013 ҫулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче йышăннă 49 номерлĕ Федераллă саккун кун ҫути курчĕ. Ҫапла вара унпа килĕшӳллĕн малашне административлă штрафа 60 кун хушшинче тӳлесе татмалла. Саккун вăя кĕриччен – 2013 ҫулхи майăн 9-мĕшĕччен панă административлă штрафа маларах асăннă йĕркене шута хурса тӳлемелле.***

# Пирĕн пата çыраççĕ

## Манăн юратнă асанне

Манăн асанне Юлия Григорьева çуркуннехи илемлĕ кун, 1932 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Актай ялĕнче Илья Антоновичпа Татьяна Яковлевна çемйинче çуралнă. Çăмăл пулман унăн ачалăхĕ: асанне 9 çул тултарсан юнлă вăрçă пуçланнă. Асаннен ашшĕне, колхозра водительте ĕçлекенскере, çав машинăпах, «полуторатонкăпа», вăрçа илсе кайнă. Вăрçă вăхăтĕнчи ачасен аслисемпе пĕр танах ĕçлеме тивнĕ, çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ вĕсем. Çум çумланă, тислĕк тиенĕ, çĕрне-кунне пĕлмесĕр утă çулнă, тырă вырнă, каççерен авăн çапнă, сăвăрса тырă тасатнă. Тӳлевсĕрех ĕçленĕ вĕсем, фронта пулăшма тăрăшнă.

Шкула кайнă чухне манăн асанне сăхман тăхăннă, урине çăпата сырнă, пиртен çĕленĕ сумккине хул пуççи çине çакнă та кирек мĕнле çанталăк пулсан та Йӳçкассине шкула чупнă. Шкулта вăл вăхăтра кăмака хутма вутă çитмен пирки сивĕ пулнă. Хут пулман пирки кĕнекесем çине те çырма тивнĕ, ручкисене хур тĕкĕнчен, чернилне юман çăпанĕ çине тутăх пăта ярса тунă. Шкултан киле таврăнсан вăл çăм арланă, алса-чăлха çыхнă. Вĕсене фронта ярса панă. Тăлла тĕртсе сăхман тума сӳс çиппине арланă. Мăн кун валли хĕрсем пир тĕртсе, шуратса çĕнĕ кĕпе çĕленĕ. Паллах, манăн асанне те. Кĕписене тĕрĕсемпе илемлетнĕ, чĕнтĕр çыхнă...

Ашшĕн вăрçăран çырнă çырăвĕсем çине çиййĕнчех хуравласа тăнă манăн асанне. Йывăр пулнă вăрçăра. Ашшĕ киле орденсемпе, медальсемпе таврăнни вара тем пысăкăш савăнăç пулнă çемйишĕн. Вĕсен çемйи нумай ачаллă пулнă: асаннен амăшĕ 9 ача çуратнă, анчах та 4-шĕ пĕчĕк чухнех вилнĕ, тепри – кайрантарах. Асанне – чи асли, унăн шăллĕсем Юрăпа Геннадий тата Перасковья йăмăкĕ пур. Сакăр çул шкулта вĕреннĕ хыççăн асанне фермăра сурăхсем, вăкăрсем пăхнă çĕрте ĕçленĕ. Хĕллехи сивĕ кунсенче вăкăр кӳлсе уй-хиртен фермăна утă-улăм турттарнă. Тивĕçлĕ канăва тухиччен «Ударник» совхозра канма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлесе пурăннă асанне, ĕç ветеранĕ ята тивĕçнĕ.



Манăн асанне Вениамин Григорьева качча тухнă. Вĕсем пилĕк ача – тăвата хĕрпе пĕр ывăл çуратса, юратса, тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕ. Пурне те шкул хыççăн малалла пĕлӳ илме, ура çине тăма пулăшнă. Ачисем çемье çавăрса хăйсен ачисене çуратсан асаннепе асатте яланах мăнукĕсене те тимлĕх уйăрма тăрăшнă. Кашни мăнукнех пăхнă асанне, мана та юратса чĕр куççи çинче утьăкка сиктеретчĕ. Халĕ те пурне те юратать, ачисемпе мăнукĕсем килсен питĕ савăнать.

Пĕлтĕр эпир асаннен 80 çулхи юбилейне паллă турăмăр. Халĕ те çулĕсене пăхмасăр ачисем пулăшнипе картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усрать, ĕне те тытать. Пĕр вĕçĕмсĕр çăм арлать, алса-чăлха çыхать. Кашни ачин çемйине пулăшма тăрăшать вăл. Çу кунĕнче пахчара пĕр çум шăттармасть. Çĕр улми кăларнă чух вара пирĕнтен те ирттерет. «Ĕмĕрĕпех çав ĕçе тунă пирки хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ», - тесе шӳтлет. Тата нумай-нумай çул пурăнмалла пултăрччĕ санăн, асанне! Пирĕн йыш татах хушăнĕ-ха, эпир те сана çитĕнӳсемпе савăнтарса тăма сăмах паратпăр.

**Анжела ГРИГОРЬЕВА,**
**Муркашри вăтам шкулта 11 класра вĕренекен.**

## Маттур фельдшер



Очăкассинчи фельдшерпа акушер пунктĕнче 9 çул ытла тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе ырă ята тивĕçнĕ Венера Матвеева урăх çĕре ĕçлеме куçсан ял халăхĕ самаях пăшăрханчĕ. Кам килĕ ĕнтĕ кунта, çулсăр-йĕрсĕр яла? Участокра 4 ял, вĕсене пĕр-пĕринчен тарăн çырмасем уйăрса тăраççĕ. Çавăнпах-и тен направленипе килнĕ çамрăк фельдшерсем 2–3 çул ĕçленĕ хыççăн урăх çĕре вырнаçма тăрăшатчĕç.

2007 çулта Шетмĕпуçĕнчи участок больницин фельдшерне Елена Матвеевăна Очăкассине ĕçлеме куçарсан халăх пăшăрханăвĕ часах иртмерĕ-ха: хăçанччен тытăнса тăрĕ-ши, Шетмĕпуçĕнчен Очăкассине тӳрĕ çул çук, автобус çӳремест. Куллен ĕçе 5–6 çухрăм çуран çӳреме те çемьеллĕ хĕрарăма çăмăл пулас çук...

Елена Гурьевна çиччĕмĕш çул ĕнтĕ Очăкассинчи фельдшер пунктĕнче вăй хурать, сывлăх сыхлавĕнче вара – 27 çул. Хăйĕн ĕçне чунтан парăнса, юратса ĕçлет вăл. Нумай енлĕ ăста специалист, пĕрмаях çĕннине алла илсе хăйĕн ĕçĕнче усă курнипе палăрса тăрать вăл. Врач хушнине вăхăтра пурнăçлать. Чирлисемпе яланах кăмăллă: эмелпе те, сăмахпа та сиплет. Ял халăхĕ хăйне пăлхантаракан тĕрлĕ ыйтупа сĕнӳ-канаш илме фельдшер пункте килет. Елена Гурьевна пур ыйтăва та хуравлать, тĕплĕн ăнлантарать, пулăшма тăрăшать.

Участокра 500 ытла çын пурăнать. Унсăр пуçне пропискăра тăманнисем те сахалах мар. Пурин сывлăхĕ те пăшăрхантарать пирĕн фельдшера. Профилактика ĕçне туса пырасси хăйĕн ĕçĕнче тĕп вырăн йышăннине палăртать. Фельдшер пунктĕнче те, çынсем патне киле кайсан та чир-чĕртен асăрхаттарма ăна сиплессинчен çăмăлраххи пирки калаçма ӳркенмест Елена Гурьевна. Очăкассинчи библиотекăра та вулавçăсемпе тĕл пулса медицина темипе çыхăннă калаçусем час-часах ирттерет. Нумаях пулмасть акă библиотекăра «Вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ» темăпа тухса калаçрĕ, вулавçăсен ыйтăвĕсене тĕплĕн хуравларĕ, кирлĕ сĕнӳсем пачĕ.

Елена Гурьевна хăйĕн ĕçĕпе те, пурнăç йĕркипе те халăх хисепне тивĕçлĕ. Вăл çав тери сăпайлă. Общество ĕçĕсене хастар хутшăнать, спорт ăмăртăвĕсенче пуçарулăх кăтартать, художество пултарулăх кружокне те çӳрет. Кашни çулах вăл юн парса пархатарлă ĕç тăвать, ыттисене те ырă ĕç тума хавхалантарать.

Ял халăхĕ маттур фельдшера пирĕн пата ĕçлеме килнĕшĕн чунчĕререн тав тăвать. Ĕмĕрĕ вăрăм пултăрччĕ сирĕн, Елена Гурьевна.

**Ял халăхĕ ыйтнипе**
**Ф. МАТВЕЕВА,**
**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## «Ентеш» 20 çул тултарчĕ

1993 çулта Калайкассинчи клуб çумĕнче юрăпа ташă ушкăнĕ йĕркеленсе кайрĕ. Вăй илсе пынă май çак ушкăн Калайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Ентеш» юрăпа ташă ансамблĕ таран ӳсрĕ. Унăн пултарулăхĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен вара вырăнта кăна мар, районĕпех пĕлеççĕ. Мĕншĕн тесен ку коллектив çулран-çул хăйĕн пултарулăх шайне ӳстерсех пырать, тĕрлĕ смотр-конкурссенче малти вырăнсем йышăнать. Паллах, çак ӳсĕмсем çӳлтен ӳкмеççĕ. «Ентеш» ансамбль ертӳçипе коллективри туслă та тачă çыхăну, ăнлану – акă мĕн пулăшса пырать.

«Ентеш» ансамбле 20 çул хушши ĕнтĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Иосиф Александров ертсе пырать. Вăл – Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыка факультетне пĕтернĕ ăста специалист. Культура çурчĕн ертӳçи Тамара Вострейкина ялти пултарулăх ушкăнĕшĕн Иосиф Александрович питĕ пысăк тупăм пулнине калать. Мĕншĕн тесен тĕрĕс тата шухăш енчен ăнланса хатĕрленĕ программа юрлакансене те хавхалантарать, куракансене те çывăхрах.

Халĕ ансамбльте пурĕ 24 çын: 16 юрлакан тата 8 ташлакан. Тĕрлĕ тапхăрта вара кунта çемьесемпех çӳренĕ. Акă Евдокимовсен, Горшковсен, Горлановсен, Вострейкинсен, Люцевсен çемйисене асăнса хăвармалла. Пирĕн ансамбль хăйĕн солисчĕсемпе те паха: В. Портнов, З. Мазуркина, Т. Скворцова тата ыттисем те маттур. Шел пулин те, çак 20 çул хушшинче пирĕнтен уйрăлса кайнисем те пур. Эпир вĕсене яланах хамăр асра тытатпăр.

Мĕн «çуралнăранпах» ансамбль Калайкассинчи вăтам шкулпа тачă çыхăну тытать. Пирĕн ташă ушкăнĕ унта вĕренекенсенчен тăрать. Вĕсене Любовь Горшкова вĕрентекен ертсе пырать, çулсерен çĕнĕрен те çĕнĕ ташăсем хатĕрлет. Кĕвĕ енчен ансамбле Иосиф Александров ертсе пырать. Пирĕн продюсер рольне вара Культура çурчĕн директорĕ Тамара Вострейкина пурнăçлать. Йĕкелӳçĕсем те, коллектив та маттур. Çавăнпах «Ентеш» час-часах концертсемпе тухса çӳреме тăрăшать, халăха савăнтарать. Эпир, ансамбле çӳрекенсем, пирĕн «Ентеш» малашне татах та аталанса пырасса шанатпăр.

**Ансамбльте юрлакансем.**

## Юмах тĕнчинче ырăлăх, туслăх çĕнтерет

Апрелĕн 2-мĕшĕнче ача-пăча кĕнекин кунĕ пулчĕ. Ăна халалласа «Солнышко» ача-пăча садĕнче юмахсен фестивалĕ ирттернĕ. Мĕншĕн тесен юмах тени яланах ача-пăча кĕнекисемпе çыхăннă.

Çак фестиваль пирки «Солнышко» ача-пăча сачĕн воспитателĕсем С. Ивановăпа О. Петрова та çырса пĕлтерчĕç. Вĕсем юмах фестивальне 1-мĕш кĕçĕн ушкăн ачисем «Курочка Ряба» юмахпа уçнине палăртса хыпарлаççĕ. Пĕчĕк пулсан та ачасем хăйсене артист пекех тытма тăрăшнине, вĕсем юмахсемпе питĕ интересленнине пĕлтереççĕ. Кунпа пĕрлех воспитательсем программăсемпе афиша хатĕрлессинче пулăшу кӳнĕшĕн Марина Ивановăна тав сăмахĕ калаççĕ.



«Ылтăн çăмарта турăм».



«Çарăка туртрăмăр-туртрăмăр – туртса кăлартăмăр!»

Фестивале кашни ушкăн юмах хатĕрлеме пулчĕ. 2–3 çулхи ачасене юмаха куракансем умĕнче кăтартса пама хатĕрлесси вара çăмăлах мар, уйрăмах хăш-пĕр ачасем ку вăхăтра йĕркеллĕ калаçма вĕренсе çитейменнине шута илсен. Апла пулин те йывăрлăха пурте пĕрле çĕнтертĕмĕр. Фестивальте ачасемпе воспитательсем вырăс халăх юмахĕсене тата Г. Андерсенăн «Дюймовочка» юмахне лартса пачĕç. Ушкăнсене, ачасене уйрăммăн хавхалантарас тĕллевпе юмах кăтартса панине тĕрлĕ номиницире хакларĕç. Фестивальре никама та кичем пулмарĕ. Юмахра ырă усала çĕнтерни, туслăх пĕтĕмпех пултарни вара ачасен асĕнче юласса шанатпăр.

**С. ГУСЕВА,**
**2-мĕш кĕçĕн ушкăн воспитателĕ.**



# Сăвă-калав çырма кăмăллакансен страници



## Ачасен ăсталăхне аталантаратпăр

Вĕрентĕвĕн çĕнĕ стандарчĕ кĕçĕн классенчи ачасене уроксенче вĕрентнисĕр пуçне уроксем хыççăн та тĕрлĕ енлĕ аталантарма сехетсем уйăрма хистет. Çак стандарт вăя кĕни иккĕмĕш çул кăна пулин те, Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ ку енĕпе мал курăмлă пулни палăрать. Çулсеренех кунта пĕрремĕш класран пуçласа вун пĕрмĕшсем таранах ачасене уроксем хыççăн 30 ытла кружок йыхравлать.

Шкул администрацийĕ ачасене пĕрремĕш класран тытăнсах анлă тавра курăмлă аталанма условисем туса парассипе тимлет. Ал ĕç ăстисенчен тытăнса ăста шахматистсем таранах хатĕрлеме тăрăшать шкул коллективĕ. Ташлакансемпе юрлакансем çеç мар, йĕлтĕрçĕсем те, тĕпчевçĕсем те пур пирĕн хушăра.

Виççĕмĕш класра вĕренекенсем вара сăвă çырас ăсталăха алла илсе пыраççĕ. Вĕсен юлашки кунсенче шăранса тухнă йĕркисем уйрăмах çыпăçуллă. Пĕрремĕш утăмсем çăмăл мар пулин те, вĕсем нумайлăха асра юлаççĕ. Тен çак йĕркесенченех пулас поэт е журналист, çыравçă е артист та çуралĕ?

**С. ФЕДОРОВА,**
**Çатракассинчи вăтам шкулта 3-мĕш классене вĕрентекен.**

Хĕвел пăхать ăшăтса,
Çурхи куна вăратса.
Пур тавралăх юратса
Кĕтет савăк пурнăçа.

Мĕн пур чĕр чун вăрансан
Çимелли шырать паллах.
Тăван ене таврăнсан
Юрлать кайăк савăнсах.

Ачасем чун-чĕререн
Йăва турĕç хăмаран
Шăнкăрчсене пурăнма,
Савăк юрă юрлама.

**ДИМА С.**

* * *

Килчĕ çуркунне савăнса
Хĕвелĕпе мухтанса.
Шыв юхать шăнкăртатса
Çут çанталăка вăратса.

Йывăç-курăк ешерет,
Чечек куçа илĕртет.
Упа та кĕç вăранать,
Сĕм вăрмана вăл сăнать.

Ачи-пăчи шав шавлать,
Вăйă пĕртте чарăнмасть.
Çуркунне пит савăнать,
Тĕрлĕ сасă кăларать.

**НАСТЯ Р.**

* * *

Çуркуннехи кунсенче
Пĕтĕм тĕнче вăранать.
Шурă юрĕ ерипен
Ирĕлмешкĕн тытăнать.

Кайăксем те инçетрен
Вĕçсе килме пуçларĕç.
Кĕçех вĕсем кунсерен
Турат, тĕк-çăм пуçтарĕç.

Çĕнĕ, ăшă йăвара
Çĕнĕ чĕпĕ сас парĕ.
Çĕнĕ çемье çĕн йышпа
Çĕнĕ куншăн савăнĕ.

**ВЕРОНИКА М.**

* * *

Чĕрĕлеççĕ чечексем –
Ырă шăршă сарăлать.
Вăранаççĕ йывăççем –
Ешĕл çулçă сарăлать.

Маттур, ĕçчен ачасем
Хатĕрлеççĕ йăвасем.
Ав çакаççĕ вĕсене
Шурă хурăнсем çине.

Вăранаççĕ кайăксем
Çĕнĕ йышпала.
Вĕçсе килеç кайăксем
Тăван çĕре мухтама.

**СНЕЖАНА Я.**

* * *

Пăхать сар хĕвелĕ –
Епле вăл илемлĕ.
Çурхи кун илемĕ
Кăмăла çĕклерĕ.

**ВИОЛЕТТА П.**

* * *

Урам тăрăх шыв юхать–
Çуркунне çитрĕ пулас.
Хĕл çуркуннепе
тавлашать,
Курак тăманĕ кăларать.

**ГЕНА Ш.**

Чăваш чĕлхин кунне халаллатăп

## Эп Чăваш çĕрĕнче пурăнатăп

Эп Чăваш çĕрĕнче пурăнап,
Эп чăваш чĕлхипе калаçап,
Эп юнпа та, чунпа та чăваш.
Эй, шăпам, сана куншăн тавах.

Вăтанмастăп эп хам чĕлхерен,
Кăмăллатăп ăна пĕчĕкрен.
Шăнкăр-шăнкăр çăл куç шывĕ пек
Пурнăçра вăй парать вăл текех.

Тăван çĕр илемне сăнлама,
Сăввăмра савăнса мухтама,
Чунăмри туйăма калама
Май парать ыр чĕлхеçĕм мана.

Юрататăп чăваш ташшине,
Çĕр пин тĕрлĕ юрри-кĕввине,
Тĕнчере çук пуян тĕррине,
Ĕмĕртен килекен йăлине.

Эй, тăванăм, ентешĕм, чăваш!
Пуплесем ачупа чăвашлах.
Ĕмĕрех янăратăр чĕлхем,
Чунсене сапалатăр хĕлхем.

Ĕмĕрех янăратăр юрри,
Тыткăнлатăр çунатлă ташши,
Тĕлĕнтертĕр илемлĕ тĕрри,
Упранайтăр сăваплă йăли.

Çакă ешĕл çĕр пичĕ çинче
Чăваш халăхĕ пурнĕ темччен
Пĕр-пĕрне ăнланса ал парсан,
Ачасем чăвашлах калаçсан.

**Лариса СЕРГЕЕВА,**
Тойкилтĕ шкулĕн вĕрентекенĕ.

## Хальхи çамрăксем

Ирех тăратпăр, пите çăватпăр,
Юратнă çĕн шкула эпир васкатпăр.
Хĕвел йăл култăр, пире çутаттăр,
Тӳлек ăш çумăрпа çĕре тасаттăр.

Хаваслă юрă пирте янратăр,
Çунатлă туслăха ялан упратăр.
Телейлĕ пурнăç савăнтартăр,
Умри çула йăлт такăрлаттăр.

Ӳссех пыратпăр, ăса кĕретпĕр,
Вылянă теттене илсе хуратпăр.
Çырма пуçлатпăр, сăн ӳкеретпĕр,
Компьютер, Интернет-сайта кĕретпĕр.

Юратнă шкулпа сыв пуллашатпăр,
Айван ачалăхран тек уйрăлатпăр.
Куллен ĕçре ăнăçу сунатпăр,
Чуна çирĕплетнĕшĕн тав тăватпăр.

**Т. МИХАЙЛОВА.**
Васкасси ялĕ.

## Çурхи тĕнче

Шывĕ юхать, иртеççĕ çулĕсем,
Асилӳсем ялан куç умĕнче.
Санпа пĕрле ирттернĕ каçĕсем
Ĕмĕрлĕхе пурнаç чĕресенче.
Алран-алла тытса çӳренисем,
Асран кайми илемлĕ вăхăтсем,
Чĕресенчи çунатлă ĕмĕтсем,
Ăçта эсир, чечек пек туйăмсем?
Çĕмĕрт сапать шап-шурă çеçкине,
Шăпчăк туптать çуллен хăй кĕввине.
Эпир санпа мĕнле юратнине
Асилтерет илемлĕ çуркунне.
Çурхи тĕнче пиллерĕ юрату,
Кĕрхи каçсем хăварчĕç çухату.

**П. ВОРОБЬЕВ.**
1980-мĕш çулсем.

## Çуркунне çитрĕ

Çитрĕ, çитрĕ çуркунне,
Сивĕ иртсе кайрĕ.
Уйсенче выртакан юр
Ирĕлчĕ те кайрĕ.

Сар хĕвелĕ юратса
Тĕнчене çутатрĕ,
Симĕс курăкĕ вара
Юр айĕнчен тухрĕ.

Вĕçсе килчĕç кайăксем –
Ман çунатлă тусăмсем.
Çавăрсассăн йăвасем
Шăрантарĕç юрăсем.

**Анна КУЛЬКОВА.**
Атапай шкулĕ, 5-мĕш класс.

## Çурхи кунсем

Акă çуркунне çитет:
Курак йăва çавăрать,
Хĕвел хĕртме тытăнать,
Шăнкăрч юрри янăрать.

Юр васкасах ирĕлет,
Курăк та симĕсленет,
Шыв шăнкăртатса юхать,
Шăпчăк та юрра ярать.

Шапа курăк çурăлать,
Меллĕн сарăлса ларать.
Симĕс курăк хушшинче
Илĕртет илемĕпе.

**ПИНЕРПИ.**

## Çуркунне

Çитрĕ ăшă çуркунне,
Кайăксем вĕçеççĕ.
Сăртсемпе уй-хирсенче
Шурă юр юлмарĕ.

Çурхи шывĕ шавласа
Çырманаваскарĕ,
Йывăçĕсем чĕрĕлсе
Симĕс тумланаççĕ.

Кайăксен çĕн юррисем
Тӳпере янраççĕ,
Ача-пăча сассисем
Кăмăла уçаççĕ.

**Настя АТЛАСКИНА.**
Атапай шкулĕ, 6-мĕш класс.

## Муркаш пасарĕ

Муркаш пасарне кĕретĕп,
Алăк уçă, сарлака.
Тĕм те пĕр хурса тултарнă
Сар пике унта-кунта.
Йĕкĕтсем ах кускалаççĕ
Сар пике йĕри-тавра.
Пикен куçĕсем çунаççĕ
Йĕкĕчĕсене курса.
Тетте пăханçи тăваççĕ
Сар пикене куç хывса,
Мĕн те пулин туянаççĕ
Çав пикене юратса.
Кинемейсем çуйхашаççĕ
Пасар кунĕ пулнăран,
Хатĕр-хĕтĕр туянаççĕ –
Пенси укçи алăра.
Малалла утса пыратăп:
Тĕрлĕрен хитре тавар.
Хăть епле тавар туян халь
Кĕсьере укçа пулсан.
Муркаш пасарĕ кĕрлет,
Катаранах илтĕнет.
Пурте килĕр пасара,
Пурнăç савăках кунта.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**
Якаткасси ялĕ.

## Кума чĕнчĕ хăнана

**(Юрă)**

Кума чĕнчĕ хăнана
Кĕрхи ĕçсем вĕçлесен.
Паян тулли кĕрекере
Саркаланать ман кума.

Парать тулли куркине
Чаш-чаш йӳçек сăрипе,
Юрла-юрла тыттарать
Сĕнсе сим пыл черккине.

Куман сĕтелли авăнать,
Автан яшки пăсланать.
Кăрăç кăмпи – чи тутли,
Хур тукмакки пысăкки.

Юр юрласан пӳрт янрать,
Ташласан урай авăнать.
Куман чунĕ савăнать,
Татах килме йыхравлать.

**Роза СОЛОВЬЕВА.**
Çатракасси ялĕ.

## Çурла уйăх

Ӳпĕнет месерле çурла уйăх
Ыйăхпа тавлашса Çĕр хыçне.
Çăмăлттай çăлтăрсен вăййинчен вăтанса
Хăйпе хăй калаçать лăх! кулса:

– Чĕпĕтет Сурхури – хавма хапăл
Çав-çавах (пуçватмăш) шух кăмăл:
Чĕнмелле савнине йăпанма пĕр кана
Ĕнер пулнă улах вырăна.

**Ӳрмек Васли.**

## Юр ирĕлет васкаса

Çуркунне, çуркунне!
Килсе çитрĕ çуркунне!
Юр ирĕлет васкаса,
Шывĕ юхать шарласа.

Тулта ачасем чупаççĕ,
Çуркуннешĕн савăнаççĕ,
Çу кунĕсене кĕтеççĕ,
Тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ.

**Д. СОКОЛОВ.**

## Вăранать çурхи çанталăк

**(Юрă)**

**1.** Вăранать çурхи çанталăк,
Çитрĕç кĕтнĕ вăхăтсем.
Ки-ка-как! Вĕçет хур кайăк,
Вĕçсе килчĕç тăрнасем.
Шурă юрĕ пĕчкĕн-пĕчкĕн
Таçта кайса çухалчĕ.
Ăшă çилĕ лăпкăн вĕрсе (2 хут)
Йĕпе çĕре хытарчĕ.

**2.** Ешерет тăван тавралăх,
Чĕрĕлеççĕ курăксем.
Хĕл ыйхинчен умлăн-хыçлăн
Вăранаççĕ вăрмансем.
Вĕçсе килнĕ кайăксем
Ырми-канми ĕçлеççĕ.
Çĕн йăвасем пуçламашкăн (2 хут)
Хăрăк турат çĕклеççĕ.

**3.**– Чак-чакак! – тет почтальонĕ, –
Итлĕр, итлĕр! Пур хыпар:
Кăнтăр хыççăн улăха
Пурте пĕрле пухăнар!
Кайăк-кĕшĕк питĕ тимлĕн
Итлет чакка-чакакне.
Кĕтнĕ вăхăт часах çитрĕ,
Кайăк-кĕшĕк умлăн-хыçлăн
Çитрĕç кайăк пухăвне.

**4.** Чи пĕрремĕш пухура
Улатакка сăмахлать.
Вăл – кайăксен санитарĕ,
Ăна итлесех пулать:
– Çитрĕç çуллахи кунсем,
Сар хĕвел хĕртет çӳлтен.
Шелемест вăл ăшшине (2 хут),
Типĕтет кӳллисене.

**5.** Юлашки çул çумăрсен
Сахалланчĕç вăйĕсем.
Çавăнпа типет тавралăх,
Сарăхаççĕ курăксем.
Мĕн тăвас? Ним те тăваймăн,
«Çӳлтен» тухаç саккунсем.
Çил-тăвăлĕ килсе çитсен (2 хут)
Тарайрас çук, тусăмсем.

**6**. Çавăнпа сире каласшăн:
Йăва çавăрас тесен
Юхан шыв хĕрне вырнаçăр,
Унта пĕчĕк йывăççем.
Ак çулла каллех канмашкăн
Килсе çитĕç хăнана
Çамрăк халăх, харсăр халăх (2 хут)
Тĕп тумашкăн вăрмана.

**7.** Кăшкăраççĕ, аташаççĕ,
Çухăраççĕ кунĕпех.
Тĕтĕм-сĕрĕм вăрман тăрăх
Явăнать-çке çĕрĕпех.
Кашни çул çулла çитсессĕн
Пит хăрушă вăрманта.
Ванчăк тĕкĕр, кашăк-чашăк (2 хут),
Ак аманĕ ура та.

**8.** Умлăн-хыçлăн пушарсем –
Çухалаççĕ вăрмансем.
Чăнах, пурăнма пит йывăр,
Пит хĕсеççĕ çыннисем.
Кайăк-кĕшĕк пĕтрĕ пулсан
Хăрса пĕтĕç йывăççем.
Йывăç-курăк типсе пĕтсен
Мĕнле пурнĕç этемсем?

**Валентина СЕЛЮШКИНА,**
**Юнкăри «Рябинушка» ача сачĕн музыка ертӳçи.**

## Çурхи сăнсем

Епле илемлĕ çут çанталăк
Çурхи кунсем килсе çитсен.
Ав айлăмра кăна «шур саплăк»
Кăшт юлнă хĕл çивиттинчен.

Хĕвел ăшши епле хĕрӳллĕ,
Кĕç симĕсленĕç йывăççем.
Епле пулаç пит илĕртӳллĕ
Çулпа утан яш пикесем.

Уç сывлăша çурса вĕçеççĕ
Тăван ене хур кайăксем.
Пĕр хушă чарăнсах сăнаççĕ
Çав вĕçеве ялти çынсем.

Çур акине кĕçех ак тухĕç
Çĕр ĕçченсем ыр кăмăлпа,
Хура çĕре вĕсем «шуратĕç»
Савса паха çеç вăрлăхпа.

Куç умĕнчех чакать «шур саплăк»
Хĕрӳ хĕвелĕн ăшшипе.
Чуна çĕклет çурхи çанталăк
Ик куç тулли илемĕпе.

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

## Эп – хусах

Ман пирки ялан калаççĕ
Эс хусах, хусах тесе.
Чăнласах çапла, суймастăп,
Эп ялан хусах, хусах.

Мăшăра тупма вăтантăм
Пĕрле ӳснĕ Надьăна.
Куç хывнипех кăвакартăм
Хам хусахăма пула.

Пĕр-пĕрне пăхса сăнатпăр,
Çывхарма çеç вăтанатпăр.
Тĕл пулсан пĕрне-пĕри
Уйрăлма манса каятпăр.

Манăн шухăш çавăн пек:
Тĕл пуласчĕ Надьăна,
Хусахран тухасчĕ çеç,
Пурăнасчĕ юратса.

Пурăнсассăн пурнăçра
Пулĕç пирĕн ачасем.
Ӳссе çитĕнччĕр вĕсем,
Кирлех пулмĕç хусахсем.

**Г. ИВАНОВ.**
Ятман ялĕ.

